*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

# ХРЕСЧЕН САССИ

5 (2518) №
Хакĕ ирĕклĕ
Эрнере икĕ хут тухать

2015
январь
кăрлач 28
ЮНКУН

1991 çулхи апрелĕн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă

ÇИВĔЧ ЫЙТУ

# Хамăра улталаса пахалăха чакаратпăр

### Тулли бидонра сĕтех-ши?

Яла ир-ирех çитекен автобуспа хулана ĕçе васкакан ял çыннин пĕр аллинче – çăмăл сумка, тепринче – тулли сĕт бидонĕ. Автобус чарăнăвне çитиччен вăл бидонне пушатма ĕлкĕрет, ирхи тата каçхи сĕте усламçăсене парать. Нумай-и, сахал-и, анчах çемье енчĕкĕнче пус çумне пус хушăнать. Ӳркенмесĕр ĕне тытакан хресченшĕн савăнатăп.

Автобус иккĕмĕш хут çаврăнса çитнĕ çĕре сĕт турттаракан машина ялтан тухса каять. Тепĕр чухне унăн "хӳрине" курса юлнăран мĕнлерех сĕт тухса кайрĕ-ши текен шухăш та мĕлтлетсе илет пуçра. Япăхах пулмалла мар ĕнтĕ, вылькăх усракансем типтерлĕ çынсемех-ха тетĕп те чуна лăплантаратăп.

Хулара ĕçлесе пурăннă май сĕт юр-варне пур чухне те ялтан çĕклесе çитерейместĕн. Пысăк лавккасенче те туянма тивет. Кун пек чухне илес тенĕ таварăн хакне кăна пахаламастăн, мĕнле сĕтрен хатĕрленине те тишкеретĕн. Тиркенĕрен мар, сывлăхшăн усăллине туянас тенĕрен. Куллен çиекен çимĕç пахалăхĕ çинчен шухăшлатăн.

"Шухăшламасăр? Ултавçăсем çывăраççĕ тетĕн-и? Укçа тăвас тĕллевпе мĕн кăна хăтланмаççĕ, мĕнле çеç суйса сутмаççĕ", – тенине, паллах, илтме тивмен марччĕ. Анчах çур ял тенĕн çавнашкал çул çине тăнине малтанах ĕненме шиклентĕм. Вăрнар районĕнчен килнĕ çырупа паллашсан автор суйса çырмастех пулĕ терĕм.

### Ултавçăсем

*"Хăшĕ-пĕри ĕмĕр тăршшĕпех çынна улталаса пурăнать. Вĕсемшĕн çын сывлăхĕ ним те мар, хăйсен кĕсйи хулăнлантăр. Пирĕн Мăн Явăшра çавнашкаллисем нумай.*



*Яла халăхран сĕт пуçтарма икĕ предприниматель пырса çӳрет. Пĕри каçхи сăвăм хыççăн урам тăрăх пуçтарать. Ирхине пыраканни те урамăн-урамăн çӳрет. Укçапа тӳрех татăлаççĕ.*

*Сĕт паракансен предпринимательсене тав тумалла, анчах хăшĕсем хăйсене ырă тунине шута хумаççĕ: сĕте шыв хушаççĕ е типĕтнĕ сĕтпе усă кураççĕ. 10 литр ĕне сĕтĕнчен 20 литр тăваççĕ те сутаççĕ. Капла кĕсьене укçа ытларах кĕрет.*

*Типĕтнĕ сĕтрен хатĕрленĕ сĕт сарă тĕслĕ, ăна кил хуçисем предпринимательсене çулталăкĕпех парса укçа илеççĕ. Пĕлетпĕр, пăрулас умĕн тапратнă чухне ĕнен сĕчĕ саралать те выльăха сума пăрахаççĕ. Пăрулана хыççăн тепĕр эрнерехех вăл шуралать. Çулталăкĕпех сарă пулмасть вĕт-ха.*

*Вăрнарта райпопа юнашар ветеринари аптеки пур. Типĕтнĕ сĕте унта туянаççĕ. Пĕр килограмĕ – 60 тенкĕ.*

*Сĕт пуçтаракансене асăрхаттарасчĕ. Кашни çыннăн сĕтне вĕсем ятарлă пробиркăна тултарса завода анализ тума яччăр. Типĕтнĕ сĕтпе усă куракансене тупсан явап тыттарасчĕ. Ултавлă сĕт парса пatшалăхран илнĕ укçана каялла шыраса илмелле.*

*Сĕт заводĕ ялсенчен турттарнă чĕртаварпа тĕрлĕ юр-вар хатĕрлесе кăларать, халăх унпа апатланать.*

*Типĕтнĕ сĕтрен ĕне сĕчĕ туса сутакан ултавçăсене явап тыттарасса шанас килет.*

*Анатолий ФЕДОРОВ.*
*Вăрнар районĕ, Мăн Явăш."*

3-мĕш стр. ➔

# Сăмахĕ пултăр вилĕмсĕр йышши!

**Культурăран Литература çулталăкне куçрăмăр. РФ Президенчĕн Владимир Путин Указĕпе килĕшӳллĕн кăçалхи çул Литература çулталăкĕ шутланать. Чăваш Енре вара çак çула Константин Васильевич Иванов çулталăкĕ тесе палăртнă. Ăна вилĕмсĕр «Нарспи» поэма авторĕ 125 çул тултарнипе çыхăнтарнă. Çавна май январĕн 23-мĕшĕнче Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕнче Литература çулталăкне чаплă лару-тăрура уçрĕç. Унта Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев та хутшăнчĕ.**

«Паянхи тĕп тĕллев – халăха литературăпа туслаштарасси. Кĕнеке вулассине каялла таврасси. Общество тата çын пурнăçĕнче литература çав тери пысăк вырăн йышăнать. Вăл çынна пĕлӳ парать, ăс-хакăла пуянлатать. Этем чунри пуянлăха ытларах кĕнекерен илет. Литература шухăш-туйăма аталантарма пулăшать, пурăнма вĕрентет», – терĕ Михаил Васильевич. Çавăн пекех вăл Константин Васильевич Иванов пултарулăхне те пысăка хурса хакларĕ. Унăн хайлавĕсем халăха çывăххине, тăван çĕре, йăла-йĕркене юратма вĕрентнине палăртрĕ.

Республика ертӳçи çамрăк ăрăва вĕрентекен, воспитани паракан учительсене, вулавăш ĕçченĕсене хисеплĕ ят тата Тав çырăвĕ парса чысларĕ.

Чăваш Енри патшалăхăн 3 библиотекинче, хуласемпе ялсенчи 535 вулавăшра 9 млн ытла кĕнеке упранать. Вĕсенчен çын таталмасть. Кашнийĕн хăйĕн сайчĕ пур. Библиотека ĕçченĕсем вулакана кĕнекене тивĕçтернисĕр пуçне культура мероприятийĕсене те йĕркелесе яваççĕ. Чăваш Енри муниципалитет библиотекисен 90 процентне компьютерпа тивĕçтернĕ.

«Кĕнекесĕр çурт чунсăр ӳтпе пĕрех», – тенĕ Цицерон. Чăн та, кĕнеке вăл сывлăш, çăкăр пекех кирлĕ. Чун апачĕсĕр пурнăç çук. Ахальтен мар: «Чăн малтан сăмах пулнă», – тенĕ авалтан.

Кăçал чăваш çыравçисен çавра çулĕсене те палăртăпăр эпир. Сăмахран, Леонид Агаков çуралнăранпа 100 çул, Петр Осипов – 115 çул, Илпек Микулайĕ – 100 çул, Николай Айзман – 110 çул çитет. Халăх кăмăллакан Любовь Мартьянова сăвăçă 65 çул тултарать. Çак уявсене халăхра асра юлмалла ирттересчĕ.

Литература çулталăкне уçма кӳршĕ регионти сăмах ăстисем те килнĕ. Сăмах май, çак кун Наци библиотекинче «Çиччĕрен – çиччĕ» кĕнеке презентацийĕ иртнĕ. Унта Атăлпа Урал тăрăхĕнчи çичĕ халăхăн – тутар, пушкăрт, удмурт, коми, мордва, мари тата чăваш – сăввисем кĕнĕ. Кун пирки уява пухăннисене «Хыпар» Издательство çурчĕн директорĕ-тĕп редакторĕ, Чăваш халăх поэчĕ Валери Туркай пĕлтерчĕ.

«Чăвашăн çĕр пин сăмахĕпе кăçал чăваш çыравçисем чи лайăх хайлавсем шăрçалаччăр», – терĕ Тутарстан халăх поэчĕ Ренат Харис. Хĕвел ăшшинче хăват илсе халăхшăн ырă кĕнекесем пичетленессе шанчĕ вăл.

Эппин, Литература çулталăкĕнче сăмах хыççăн сăмах çырăнтăр, йĕрке хыççăн йĕрке шăрçалантăр. Çĕр пин сăмахпа çĕнĕ кĕнекесем пичетленччĕр. Поэт калашле «сăмахĕ пултăр вилĕмсĕр йышши!»

**Валентина ПЕТРОВА.**

### Çĕнĕ çулта – пĕрремĕш

2015 çулти пĕрремĕш ача сачĕ çак тунтикун Шупашкарта уçăлнă. 165-мĕш номерлĕ ача сачĕ хальччен ĕçлемен мар, анчах чĕрĕк ĕмĕр хушшинче кунти хатĕр-хĕтĕр кивелсе çитнĕ, çурта юсама вăхăт çитнĕ. Юсав ĕçне пуçăнсан строительсем унăн сăн-сăпатне тĕпрен улăштарнă. Малтан кунта 160 ача çӳренĕ, халĕ – 350. Пĕтĕмпе 14 ушкăн йĕркеленĕ, унта çулталăк тултарнă ачасенчен пуçласа 7 çула çитейменнисем çӳреççĕ. Çакă ашшĕ-амăшĕсĕн питех те меллĕ, пепкисене ача садне вырнаçтарса кулленхи ĕçе тухма пултараççĕ.

Ача сачĕн "çуралнă кунне" паллă тума Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев та хутшăннă. Шкул çулне çитеймен ача-пăча учрежденийĕсене модернизацилемелли программа республикăра ăнăçлă пурнăçланать. Çĕнĕ ача сачĕ усăллĕн çакна аван ĕнентерет. Ăна юсаса çĕнетме 33 млн тенкĕ тăкакланă.

### Ĕçсĕррисем сахалланнă

Чăвашстат кăтартăвĕпе – 2014 çулта ĕçсĕрлĕх шайĕ виçĕмçулхинчен чакнă. Нумаях мар, çын шучĕпе илсен – 4,3 пин чухлĕ. Пĕтĕмпе республикăра 34,0 пин çын ĕçсĕр шутланать.

### Паха таваршăн – пахалăх палли

Иртнĕ çул вĕçĕнче Раççей Федерацийĕн Общество палатинче çĕршыв Президенчĕ ачасен интересĕсене хӳтĕлес тĕлĕшпе палăртнă наци стратегийĕ (2012-2017 çулсем валли) çинчен калакан Указ мĕнле пурнăçланса пынине тишкернĕ. Çак сăваплă ĕçе хутшăнакан организацисен ĕçне пахаланă, "Чи лайăххи – ачасене" программа кăтартăвĕсене пĕтĕмлетнĕ. Ача-пăча валли кăларакан таварăн, ăна пулăшмалли майсен конкурсĕнче çĕнтернисене Пахалăх паллипе хавхалантарнă.

Çĕнтерӳçĕсен йышне Тăвай районĕнчи "Акконд-агро" фирма та лекнĕ. "От Красули" ятпа сутăнакан сĕт, кефир, турăх тата хăйма хаклавçăсен чи пысăк парнине – Пахалăх паллине – тивĕçнĕ.

### Юсав тăсăлмалла

Раççейри транспорт тытăмне аталантарма йĕркеленĕ программăпа пĕлтĕр республика территорийĕпе иртекен М-7 "Волга" автоçула юсанă. Çак ĕçе пурнăçлама федераци бюджетĕнчен 2726,3 млн тенкĕ уйăрнă. Унпа йăлт усă курнă. Кăçал юсава малалла тăсма тата 1510,5 млн тенкĕ уйăрма палăртаççĕ.

### ÇАНТАЛĂК

| Шупашкарта | Вăхăт | 28.01 | 29.01 |
|---|---|---|---|
| Температура, °С | 2–4 сехетре | –9 | –7 |
| | 14–16 сехетре | –8 | –5 |
| Юр çăвать | | * | * |
| Атмосфера пусăмĕ, мм | | 752 | 749 |

**«Хресчен сасси» – Хĕрлĕ Чутай районĕнче**

# Çĕр – тухăç амăшĕ, ĕç – тухăç ашшĕ

**Унăн ĕç кĕнекинче пĕртен пĕр йĕрке: «Коминтерн» совхоза механизатора йышăннă. 1980 çул». Унтанпа шыв-шур самай юхнă. Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ механизаторĕ, Раççей Федерацийĕн ялхуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Юрий Татаров халĕ те çак хуçалăхрах сухалать-акать. Уншăн пурнăç урапи пĕр вырăнтах тăрать тейĕн.**



Л. Никитина сăнÿкерчĕкĕ

## Ĕçлемесĕр ĕç ÿсĕнмест

Паллă механизаторпа кăсăкланнине пĕлсен Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Атнар ял тăрăхĕн ертÿçи Александр Кузнецов: «Самолетпа ÿксен те пĕр сасă кăлармĕ вăл», – тесен тĕлĕнмерĕм – çĕр ĕçченĕсем сăмах ваклама юратманнине пĕлетĕп-ха. «Хĕрлĕ Чутайсем яланах çивĕч чĕлхеллĕ те харсăр пулаканччĕ», – лăплантартăм хама вăрăм çула тухнă май.

Юрий Татаров Туканашра çуралса ÿснĕ. Шкултан вĕренсе тухсан иттисем пек хулана туртăнман, тăван ялтах юлнă. Ашшĕ уйхир бригадирĕнче вăй хунă май ывăлне те хуçалăх ĕçĕнчен хăварман. Çĕр сĕткенĕпе ÿснĕ çамрăк умри çулне те унпах çыхăнтарнă. «Коминтерн» хуçалăх çуменчи механизаторсен курсĕнче хăватлă техникăпа ĕçлеме хăнăхнă. Опытлă çынсен кашни сăмахне ăса хывма, вĕренсе юлма тăрăшнă. Пултаруллă йĕкĕте хуçалăх ертÿçисем асăрханă, яваплăрах ĕçе явăçтарнă. Аслисем хăйне шанни çамрăка савăнтарнă, çанă тавăрсах ĕçе пикеннĕ.

Çартан таврăнсан каллех юратнă ĕçне кÿлĕннĕ механизатор. Ирхи хĕвелпе тăрса ака-сухана тухнă. Килне сĕм çĕрле, уйран ура иртми пуличчен ĕшенсе таврăнсан та ÿпкелешмен. Уй-хир пушансан Юрий Зиновьевич фермăра тăрăшнă. Предприяти вылăх-чĕрлĕх йышлă усрать. Хĕлле те ĕç пайтах: тислĕк кăлармалла, вылăх апачĕ турттармалла...

Çав хушăрах техникăна çуракине хатĕрлеме те вăхăт тупать.

– Канма та пĕлмест, – терĕ мăшăрĕ, Елена Александровна. – Икĕ çул каялла хуçалăх ăна санаторие канма ячĕ. Ĕçсĕр ларса мĕнле чăтрĕ-ши?

Хастар çынпа çывăхрах паллашма фермăнах çитсе килме шутларăмăр.

– Ĕçленĕ вăхăтра хăйне чăрмантарнине килĕштермест вăл, – асăрхаттарчĕ хĕрарăм пирĕнпе çула тухнă май. – Ĕç уншăн малти вырăнта. Техника чăхăмласан е мĕн те пулин сиксе тухсан çĕрĕпе çывăраймасть, кулянать. Ака-сухана тухсан кил, çемье пирки манать. «Халĕ ан чăрмантар-ха, çуракине пĕтермелле», – тет. Хĕрÿ тапхăрта уйхиртен кĕме пĕлмест: кăвак шуçăмпа тăрса тухса каять те çур çĕрпе таврăнать, – кăмăллăн калаçать хĕрарăм. – Ĕçлени – ĕçсе-çапкаланса çÿрени мар. Хăш чухне ывăнсах çитет, хĕрхеннипе шеллес килет ăна. Анчах нăйкăшса тарăхса ларнине илтмен унран.

Пушă ферма территорийĕнче трактор кĕрлени кăна илтĕнет. Юрий Татаров сенаж тиет-мĕн: ĕнесене апат пама хатĕрленеççĕ. Ĕçне вĕçлемесĕр те кабинăран тухмарĕ вăл. Унтан техникине сÿнтермесĕрех сиксе анчĕ – пирĕнпе сăмахлама вăхăт хĕсĕккине систерчĕ ĕнтĕ. Кĕрнеклĕ арçын куçĕсем ăшшăн кулса пăхаççĕ. Хĕрлĕрех çÿçĕ çилпе вылять.

– Хĕлле те канма пĕлместĕр-çке, – тетĕп ăна.

– Механизаторсем отпуска кайнипе вĕсен вырăнне юлтăм-ха. Сывлăх, вăйхăват пур чухне килте мĕн туса лармалла? Пенсие тухсан та канма пулĕ, – хуравларĕ арçын.

Вăтăр çул каялла Юрий Татарова хуçалăхра кивĕ ДТ-75 трактор шанса панă. Çамрăка çĕннине тыттарма хăранă пулас. Унпа сакăр çул ака-суха тунă вăл. «Кабинăра сивĕ, витĕр çил вĕретчĕ. Хытă кĕрленĕрен каç енне илтмиех пулаттăм. Кивĕскер часчасах ванатчĕ, хамах юсаса хута янă. Кашни гайки-болтне тыта-тытах техникăна аларипилĕк пÿрне пек вĕренсе çитрĕм», – аса илет çĕр ĕçченĕ. Кайран тата хăватлăрах гусеницăллă трактор çине куçнă. Унпа та самай тар тăкнă. Халĕ вăра «ДжонДир» тракторпа уй-хире тухать. Чаплă техникăна упрама тăрăшать механизатор.

– Унпа ĕç калăпăшĕ пысăкрах, перекетлĕ. Кабинăра таса, ăшă. Ĕçе йăлтах компьютер йĕркелесе пырать. Хăш чухне хама самолет штурвалĕ умĕнче ларса пынăнах туятăп. Унччен тĕлĕнтермĕш техникăна сенкер экранпа пăхса тĕлĕнеттĕм, ăмсанаттăм. Кам шутланă вăл пирĕн хуçалăха та çитессе? – терĕ Юрий Зиновьевич.

Çуркуннерен пуçласа юр ÿкиччен акма çĕр хатĕрлет.

## Сăкăр пурне те пуçлăх

– Ĕмĕрĕпех çĕр ĕçĕнче тăрăшнă май танлаштармалли пурах ĕнтĕ сирĕн. Юлашки вăхăтра ялхуçалăхĕнче пулса иртекен улшăнусем тивĕçтереççĕ-и?

– Ырри те, ситменлĕхĕ те пайтах. Унччен сакăр çул ĕçлесен техникăна пăрахăçланă. Ун вырăнне иккĕ çĕннине илетчĕç. Вĕсене те тÿлесех илнĕ, анчах хальхи пек хаклă тăман. Халĕ пĕр-пĕр техника туянни хуçалăха çаратса хăварать. Кредичĕсем те хуçалăха каялла туртаççĕ. Рынок тапхăрне чăтаймасăр районта мĕн чухлĕ хуçалăх арканчĕ. Юрать пирĕн предприяти ура çинче çирĕп тăрать, ял çыннисем ĕçсĕр лармаççĕ. Шалăва вăхăтра тÿлеççĕ.

– «Коминтерн» хуçалăхра çĕр ĕçĕнче çамрăксене курма пулать-и?

– Пур-ха вĕсем, анчах сахалрах. Ĕлĕк ача-пăча велосипедпа ярăнса ÿснĕ. Халĕ – машинăпа. Çавăнпа трактор çине лартма йывăртарах. Юлашки тапхăрта Алексейпе Андрей Андреевсем, Лев Кашкиров, Василий Порейкин ака-сухана хутшăнма тытăнчĕç. Йыша яш-кĕрĕм хушăнни, аслисен ĕçне малалла тăсакан пурри савăнтарать. Апла малашне те уй-хире хытхура пусмĕ.

– Ĕлĕкрех çĕр çынни хисепре пулнă. Паян пайтаçăсем, ĕлĕкхилле каласан спекулянтсем, çĕкленсе кайрĕç. Сăкăр туса илекене çакă кÿрентермест-и?

– Кирек кам та çăкăр çимесĕр пурăнаймасть. Ăна вара хресчен çитĕнтерет. Çĕр çинче ĕçлекен хисепе тивĕçлĕ. Акă пĕр вăхăт ăна вырăна хума пăрахнипех уй-хире çумкуракĕ пусса илме тытăнчĕ. Çĕршыв ертÿçисем те йăнăша ăнланса илчĕç, ялхуçалăхне ытларах пулăшма тытăнчĕç. Ют çĕршывран апат-çимĕç турттарма чарнă май пайтаçăсен те пирĕн куçранах пăхма тивĕ.

– Ют çĕршыв пулăшăвĕсĕр, вырăнта туса илекен çимĕçпе кăна тăранса пурăнайăпăр-и?

– Ĕлĕкрех сĕтел çинче хамăр апат-çимĕçех хуçаланнă. Халĕ мĕн чăрмантарать? Акă хуçалăхăн пахчинче улма-çырла йăтăнса пулатчĕ. Вырăнта туса илни çĕрсе выртать, çичĕ ютран вара улма-çырла турттаратпăр. Йĕркеллĕ хранилищĕсем тумалла. Вара хĕлĕпех улма-çырлапа, пахча çимĕçĕпе халăха тивĕçтерме пулĕ.

4-мĕш стр. ➔

# Чăвашлах пурăнасчĕ

**– Мĕнле пурăнатăр, ачасем?**

**– Хорошо.**

**– Ачасем, эсир вырăссем-и? Мĕншĕн чăвашла хуравламастăр? Тепĕр хут калăрха: мĕнле пурăнатăр?**

**– Лайăх.**

**Ку – пурнăçри тĕслĕх. Хăш районта пулса иртнине асăнмастăп, анчах хулара е ун çывăхĕнче мар, чăн чăваш ялĕнчех. Район администрацийĕн пуçлăхĕ ача садне çÿрекенсем хăйĕнпе чăвашла калаçасса шаннă, анчах йăнăшнă. Тăван чĕлхе çинчен аса илтерсен тин кĕтсе илнĕ чăваш сăмахне.**

**Халăх пĕтмесĕр чĕлхе пĕтмест тетпĕр-ха та, анчах пурнăçра, куратăр-и, ав мĕнле пулса пырать. Мĕншĕн-ши?**

– Чăваш чĕлхи предметне ачасем шкулта чиперех вĕренсе пыратчĕç. Виçĕмçул экзамен тыттарма пăрахрĕç те вырăс чĕлхипе танлаштарсан ун çине чалăшрах пăхма тытăнчĕç. Кĕçĕн тата вăтам классенче çакă сисĕнсех каймасть, 9-мĕш класра вара аванах палăрать, – ăнлантарчĕ Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Мăн Этменти шкулта ял ачисене 43 çул чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен Мария Ивановна Ярадаева.

**– Мария Ивановна, сирĕн сăмахăрсене ĕненмесĕр тăма çук. 16 çул шкул коллективне ертсе пырса ачасене туйма хăнăхнă, вĕсем ыран мĕнле пуласса та куратăр ахăртнех. Шкултан тăван чĕлхене тартас мар тесен мĕн сĕннĕ пулăттăр?**

– Эпĕ сĕннипех лару-тăрăва улăштараймăн. Анчах, ман шухăшпа, чăваш чĕлхипе экзамен тыттарассине каялла тавăрмаллах.

**– Ырри патнех таврăнмалла апла. Ял тăрăхĕн депутачĕ пулнă май чăвашлăха упрамашкăн ялсене те çăмалла пек туйăнмасть-и сире?**

– Тĕрĕс шухăш патне илсе пыратăр. Ялта ача сахал çуралать. Хĕллесерен пушă ларакан çурт чылай. Каçсерен урама уçăлма тухсан пăхатăп та хам пурăнакан урамрах çавнашкалли вунна çитет. Кил хуçисем аякра пурăнаççĕ. Картишре вылăх сасси, çулла пахчара çава сасси илтĕнмесен ялта кичем пек çав.

**– Каçарăр та, халĕ ялта ĕлĕкхи пек вутă хутса тертленмелле мар, çурта çутçанталăк газĕпе ăшăтаççĕ, шыва та пÿртех кĕртеççĕ, такăр çул пур. Ĕç вырăнĕ çукран çынсем хуланалла тараççĕ-и?**

– Ялта ĕç çук тесе тепĕр чухне влаçа айăплама тăрăшатпăр. Хамăртан нумай килет. Ав ман ывăл: "Пурăнма пĕлсен ялта та аван", – тет. Хулара аслă вĕренÿ заведенийĕ пĕтерчĕ пулсан та çуралнă вырăнтах юлчĕ, хăй ĕç йĕркелерĕ, халĕ ун патĕнче темиçе çын тăрăшать.

Капла хамăн çемьене мухтанă пек пулса тухрĕ-ха. Тепĕр тĕслĕх: вылăх усракан Осиповсене илер. Урокра ачасене вĕсене ырă тĕслĕх вырăнне илсе паратăп. Ĕмĕр тăршшĕпех ялхуçалăхĕнче, фермăра вăй хунă тетĕп. Вылăх усрасах лайăх пурăнаççĕ. Чаплă çурт лартнă. Ачисем те ялтах. Пĕчĕкрен тарпа писнĕ çынсен ачисем пурнăçра тĕрĕс çулпа утаççĕ.

**– Хăвăр вĕрентекен ачасенчен яла юлас текенсем тупăнаççĕ-и?**

– Çук мар, пур. Сăмахран, ача çуратнăшăн патшалăх амăшĕн капиталĕпе тивĕçтере пăрахмасан, ытти социаллă программăсем те малалла "ĕçлесен" шанăç ытларах çирĕпленет. Мăнуксене шутласан эпир çемьере çиччĕн. Мăнуксенчен хăшĕ те пулин ашшĕне пăхса яла юлатех. Астăватăпха, эпĕ пĕчĕкрен атте-аннене яла юлатăп тесе калаттăм. Шăллăм хулана килĕштеретĕп тетчĕ. Шухăшласах калана пулĕ çав – йăлт тÿрре тухрĕ.

**– Ял тăрăхĕн депутачĕнче ĕçлесе халăх умĕнче тÿрре тухма пулать-и?**

– Çынсемпе ĕçлеме çăмăл мар, анчах тăтăшах тĕл пулса калаçатпăр, ăнлантаратпăр. Тепĕр чухне çапла касчĕнех вăхăт иртет. "Сана урама кăларса яр çеç, часах çухалан", – теççĕ вара килтисем.

– Калаçнипе кăна çырлахмастăр пулĕ, ахăртнех, йышпа ĕç те тăватăр.

– Ара ĕçне пурнăçлас тесен çĕр шухăшлă çынна пĕр шухăш патне илсе çитермелле-çке. Йышпа кĕперсене, каçăсене çĕнететпĕр, çăлкуçсене тасататпăр. Иртнĕ çул масара типтерлерĕмĕр. Унта ĕçе вĕçлемен-ха, кăçал карта тытасшăн. Ĕç тума укçа пуçтарас тесен ăнланакканни тÿрех пулăшма тăрăшать. Тепри ĕçе туса пĕтерсен тин вăранать пулсан та хăйĕн тÿпине хывмаваскать. Яла илем кÿме укçа-тенкĕ нихăçан та ытлашши мар.

**– Чăвашлăх упрансан ял пуянран та пуян пулĕччĕ...**

– Хăй вăхăтĕнче мероприятисене Шупашкар районне çÿресен тĕлĕнеттĕмччĕ. Ачасем тăхтавсенче вырăсла калаçаççĕ, анчах уроксенче чăвашла тĕрĕс çыраççĕ. Район хула çывăхĕнче вырнаçнăран çапла пулĕ, пирĕн пата унашкалли çитес çук теттĕм. Йăнăшнă. Ялти ачасем çуллахи каникула канма килнĕ хула ачисенчен часах вырăсла калаçма хăнăхаççĕ. Теприн ашшĕ-амăшĕ килте те вырăсла пуплет. Вырăс чĕлхине лайăх пĕлни япăх мар-ха, анчах чăвашла та çапла вĕренесчĕ. Ачасем чăвашла тĕрĕс калаçма, çырма тăрăшмаççĕ теместĕп. Таджикистанран пĕр çемье куçса килчĕ. Вĕсен хĕрĕ шкулта чăваш чĕлхине питĕ тăрăшса вĕренет. Чăваш ачисем ăна ăшшăн йышăннăранши таджик хĕрĕ ыттисенчен нимĕнпе те уйрăлса тăмасть темелле. Ашшĕ Мускавра ĕçлет, чăвашсене çав тери хисеплет. Тăван çĕршывĕнчен çемьен тухса тарма тивнĕ. Мускава çитсен чăвашсемпе паллашнă та лешсем ăна пулăшнă. Кÿршĕ ялта çемье çурт туянса тĕпленчĕ. Халĕ Мускавра ĕçлекен таджик çакăншăн хăй чăвашсене пулăшма ăнтăлать. Çав тери ĕçчен, лайăх халăх тет вĕсем пирки.

Кун пек чухне чăваш ачи хăй чăваш пулнине манма хăймалла мар.

**Ирина НИКИТИНА.**

**Мĕн калаçтарать?**

# Пайсăр юлас мар

**ХХ ĔМĔРĔН 90-МĔШ ÇУЛĔСЕНЧЕ КОЛХОЗ-СОВХОЗ ЧЛЕНĔСЕНЕ ПУРНЕ ТЕ ПАЙ ÇĔРĔСЕНЕ ВАЛЕÇСЕ ПАНĂ. ГРАЖДАНСЕНЕ ХАРПĂРЛĂХА ПАНĂ ÇĔРСЕН ЛАПТĂКĔ ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ ЯЛХУÇАЛĂХ ПĔЛТЕРĔШЛĔ ÇĔРСЕН ÇУРРИ ЯХĂННЕ – 543 ПИН ГЕКТАР – ЙЫШĂНАТЬ.**

Хăш-пĕр районта пысăк хирсене арендăна илнĕ. Вĕсене ялхуçалăх организацийĕсем е вырăнти фермерсем сухаласа акаççĕ. Теприсенче вара хытхура çитĕнет. Граждансем хăйсен çĕр пайĕпе усă курмаççĕ. Лаптăк пур, анчах унпа мĕн тумаллине пĕлмеççĕ. Документсем тума укçатенкĕ тăкакласшăн мар. Кăлăхах. Росреестрăн Чăваш Енри управленийĕ пĕлтернĕ тăрăх – виçĕ е ытларах çулта çĕр пайĕпе усă курмасан е ăна регистрацилемесен вăл кирлĕ мар шутланать. Çавна май суд йĕркипе муниципалитет харпăрлăхне куçать.

Суда париччен вырăнти хăйтытăмлăх органĕн усă курман çĕр пайĕсен списокне массăллă информаци хатĕрĕсенче пичетлемелле е ăна информаци стендне вырнаçтармалла. Пĕтĕм процесс 4 уйăх ытла тăсăлать.

Йĕрке тăрăх харпăрлăх правине ял тăрăхĕ тивĕçнине пĕлтерет суд. Паянхи кун тĕлне муниципалитет харпăрлăхĕнче – 30 пин ытла çĕр пайĕ.

«Шел пулин те, республикăра пурăнакансенчен чылайăшĕ çĕр пайне вăхăтра йĕркелемеллине пĕлмест. Час-часах вĕсем кун пирки суд вăхăтĕнче çеç тавçăраççĕ», – тет Росреестрăн Чăваш Енри управленийĕн ертӳçин çумĕ Татьяна Васильева.

Çакнашкал лару-тăру кунсеренех тĕл пулать.

Андрей Шапошников хăйĕн çĕр пайне «кирлĕ маррисен» шутне кĕртнине суд йышăнăвĕнчен çеç пĕлнĕ. Ятарлă хута почтăпа ярса pană. Суд арçынсăрах иртнĕ.

«Эпĕ вахта мелĕпе ĕçлетĕп. Çур çул килте пулмастăп. Шăпах çак вăхăтра мана суда чĕнсе янă пулас. Унта вара çĕр лаптăкĕн шăпине татса панă. Кӳренмелле паллах», – тарăхнă Андрей. Вăл суд йышăнăвĕпе килĕшмен, çĕр пайне каялла тавăрасшăн пулнă. Анчах суд унăн аппеляци жалобине тивĕçтерме килĕшмен.

Суд палăртнă тăрăх, А.Шапошников çĕрпе усă курман, ăна çĕр пайĕ пек палăртман. Куçман пурлăх прависен патшалăх регистрацине йĕркелемен. Ял тăрăхĕ саккуна пăхăнса йышăнман çĕр пайĕ пирки район хаçатĕнче, Интернет сайтĕнче, ял тăрăхĕн территорийĕнчи информаци щичĕсенче пичетленĕ. Çавна май саккунпа ял тăрăхĕ çĕр хуçисене пайăррăн хыпарламасан та пултарать. Унсăр пуçне гражданинăн лаптăкпа усă курма пур услови те пулнă. Анчах вăл унпа ĕçлемен. Кил хуçин хăйне вăрçмалли çеç юлнă.

Суд ларăвне кайма йыхрав илсен çеç чылай гражданин çĕр пайне «кирлĕ маррисен» списокĕнчен кăларма ыйтать. Вĕсенчен пĕри – Оксана Николаева.

Çĕр пайне вăл еткере амăшĕнчен илнĕ. Хăй Шупашкарта пурăнать, яла, ашшĕамăшĕ патне, сайра-хутра каять. Судран çыру килсен çĕрсĕр юласран шикленнĕ вăл.

«Паллах, 2 гектар çĕр çинче пĕччен ĕçлейместĕп эпĕ. Анчах çĕр паян никама кирлĕ мар пулсан, ыран вăл лайăх тупăш пама пултарать. Пурнăçа пĕлейместĕн. Тен, пирĕн ялта та ырă фермер тупăнĕ. Вăл çĕре арендăна илĕ. Эпĕ ун чухне е укçаллă, е тĕш тырăллă пулăп. Япăх-им? Нимсĕр юличчен, ан тив, çĕр пайĕ пултăр», – тет Оксана Николаева.

Вăл хăйĕн çĕр пайне упраса хăварчĕ. Паян Росреестрта регистрациленме документсем тăвать.

**Енчен те сирĕн е аçăр-аннĕрĕн çĕр пайĕ пулсан ăна регистрацилеме тăрăшăр. Çакна тума Росреестра, Кадастр палатине, нумай функциллĕ центра пымалла.** Маларах ял тăрăхĕнче сĕнӳ-канаш илме е Росреестрăн пĕрлехи телефон номерĕпе (8 800 100 34 34) шăнкăравлама пулать.

**Марина ИВАНОВА.**

# Хамăра улталаса пахалăха чакаратпăр

← 1-мĕш стр.

### Тĕрĕслемесĕр май çук

Таса чунлă çын теприне улталама хăяймĕ паллах. Çыру авторĕ хăйĕншĕн кăна шухăшламасть, патшалăх укçи перекетлентĕр, хулари лавккасенче пахалăхсăр сĕтрен хатĕрленĕ юр-вара туянса çынсен сывлăхĕ ан хавшатăр тет.

Республикăри заводсене халăхран мĕнлерех пахалăхлă сĕт пырать-ха? Кăсăклансах тĕпчерĕмĕр. Акционерсен **"Ядринмолоко"** пĕрлешĕвĕнче пахалăхсăр чĕртавар мĕнле çулпа килнĕ, çавăнпах каялла каять. Республикăри сĕт тирпейлекен ытти предприятисемпе танлаштарсан кунта чи чаплă йышши хатĕрхĕтĕр вырнаçтарнă. Çавна май тинтерех кăна хута кайнă завод паха сĕте кăна йышăнма пултарать. Пахалăха тĕрĕслекен лабораторишĕн çеç темиçе миллион тенкĕ тăкакланă. Владислав Александрович Пульков специалист палăртнă тăрăх – унашкалли федерацин Атăлçи округĕнче урăх çук.

Хăйсен патне сĕт турттаракансенчен кунти специалистсем çирĕп ыйтаççĕ. Кун пек чухне халăхран пуçтарнă сĕт пахалăх картне лараймасть-мĕн. Сĕтре виçеллĕ пулмалли кашни япалана лабораторире тĕплĕ тĕрĕслеççĕ. Халăх сĕтĕнче вара мĕн кăна çук: шыв хушнисĕр, типĕтнĕ сĕтпе хутăштарнисĕр пуçне йӳçеке е ытти ырă мар япалана пытарас шутпа апат соди те, тăвар та яраççĕ. Калăпăр, завод умне 4 тоннăллă сĕт машини çитсе тăрать. Тепĕр çĕрте цистернăри сĕте пĕр хутчен çеç тĕрĕслеççĕ. Етĕрнере вара цистернăн кашни секцийĕнчи тĕрĕслев витĕр тухать. Пахалăх тивĕçтермесен машинăпа сывпуллашаççĕ.

"Çавăнпа ытларах ялхуçалăх организацийĕсемпе ĕçлетпĕр. Вĕсенче япăх-и е начари, анчах сĕт пахалăхне вырăнта тĕрĕслеççĕ. Кашни уйăхрах ветеринари справкипе тивĕçтереççĕ. Мĕнлерех чĕртавар çитессе пĕлсе тăратăн", – тет Владислав Александрович.

Хăш-пĕр райпо хăйĕн сĕтне Етĕрнере йышăнманран кăмăлсăрланни те пулать-мĕн. Райпо сĕте халăхран пуçтарать. Ялсенче пурăнакансен чĕртаварне мĕншĕн тĕрĕслемелле мар? Çакна тума вырăнтах пĕчĕк лаборатори йĕркелеме те пултараççĕ. Чаплă йышши хатĕрсем туянмасан та пахалăха чи пĕчĕк шайра та пулин тĕрĕслеме май пур. Çук вĕт, тăкакланасшăн мар.

Канашри "Магнит" лавккара **"Молочная империя"** ятпа сутăнакан сĕт юр-варне асăрхама тӳр килнĕччĕ. Йĕпреçсем хатĕрлеççĕ-мĕн ăна. "Чи паха сĕт пирĕн пата питех те сахал килет – 3 процент çеç. Пĕрремĕш сортпа – 95 процент. Пахалăхпа пач тивĕçтерменни те пулать", – хуравларĕ мана производствăна тытса пыракан Татьяна Анатольевна Касконова. Халăхран пуçтаракан сĕт "чирлине" кунта та асăнмасăр иртмерĕç. Хĕллехи тапхăрта ĕнесем пăрулаççĕ. Пăруланă хыççăн сĕт тасаличчен кĕтмест ял çынни. Çăраскернех сутма васкать. Маститли самай-мĕн. Сĕтре антибиотик пурри те палăрать. Апла укол тунă выльăхăн сĕчĕпе кирлĕ чухлĕ кун иртмесĕрех усă кураççĕ. Çăратса калăпăша ӳстерме типĕтнĕ сĕтпе хутăштараççĕ.

**Куславккари сĕт заводне** те чи пысăк пахалăхлă чĕртаварпа ĕçлеме тӳр килмест. Кунта турттаракан сĕтĕн ытларах пайĕ пĕрремĕш сортлă.

Ял çыннисен сĕтне тĕрĕслемесĕр пуçтарни хăйсемшĕн хакла кайса ларнине аван ăнланса çитнĕ Етĕрнесемпе Куславккасем: тулли сĕт машинисене каялла та янă. Çавăнпа халăхран сĕт пуçтарма çула тухакансем водитель-экспедиторсем те, лаборантсем те хăйсемех. Вĕсене пахалăха пĕр-ик енчен хаклама пултаракан хатĕрсемпе тивĕçтереççĕ. Вăл е ку çыннăн сĕчĕ иккĕлентересессĕн чĕртавар пуçтаракан ăна ал айĕнчи хатĕрпе тĕрĕслет.

Заводсем сĕт пахалăхне пултарнă таран тĕрĕслесех йышăнаççĕ. Анчах мана пĕр самант çав-çавах канăç памарĕ. "Пĕчĕк заводсене килекен сĕте Етĕрнери пек чаплă йышши лабораторире тĕрĕслесен мĕнлерех кăтарту пулĕччĕши?" – темиçе хут та ыйтрăм хамран.

Тирпейлекен предприяти чĕртаварсăр ĕçлеймест. Тен, сĕт çитмен чухне пахалăхсăррине те уямаççĕ? "Кун пек чух производствăна чарма та тивет", – терĕç Йĕпреçсем.

Ял çыннисем вара лăпланма шухăшламаççĕ те. Сутакан сĕт виçине, унри белок тата ытти япаласен шайне ӳстерес тесе темĕн те пĕр хушаççĕ. "Пурнăçран юласшăн мар курăнать. Хальхи çынсем темĕн те пĕлеççĕ. Нумайăшне Интернет вĕрентет", – пытармарĕ шухăшне Етĕрнери сĕт завочĕн специалисчĕ.

### Хăвăн та, пускилĕн те таса пултăр

Сĕте ытла та йӳнĕ хакпа пуçтарни пирки ял çыннисем тăтăшах ӳпкелешеççĕ. Таса сĕт сутакансене ăнланмалла, шеллемелле. Анчах вăл янă сĕт хыççăн цистернăна кӳрши ултавлине хушать те машинăри сĕте йăлтах юрăхсăра кăларать. Çавăнпа Вăрнар районĕнчи Анатолий Николаевич Федоров пек пур чухне те сыхă тăмалла, улталакана именмесĕр асăрхаттармалла.

Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Патшалăх Канашне янă Çырăвĕнче ял çыннисене хавхалантарчĕ. **"Сĕт туса илекен пĕчĕк калăпăшлă хуçалăхсен ĕçченĕсем кашни çулах çуркуннепе çуллахи тапхăрта йĕркеленекен туяну хакĕсем йӳнĕрен кăмăлсăр пулнине тĕрĕсех палăртаççĕ. Çавăнпа та Чăваш Ен ялхуçалăх министерствипе Экономика аталанăвĕн министерстви, Патшалăх ветеринари служби тата районсемпе хуласен администрацийĕсен умне чĕрĕ сĕт пахалăхĕпе калăпăшне тата сĕт туса илекенсен таврашĕнче йĕркеленекен хаксене патшалăх тĕрĕслесе тăрассине тивĕçтерме тĕллев лартатăп",** – терĕ.

Çавăн пекех сĕт туса илекен килти хушма хуçалăхсемпе, вĕсем паракан сĕт пахалăхне шута илсе, тӳлесе татăлмалли тухăçлă тытăма 2015 çулхи утă уйăхĕн 1-мĕшĕнчен йĕркелеме хушрĕ. Ертӳçĕ сăмахĕнче сĕт пахалăхĕ тени татăлмарĕ. Шухăшлар-ха, тăвансем, хамăра хамăр улталаса пахалăха чакарсан сĕт хакĕ епле пысăк пултăр-ха?..

**Ирина НИКИТИНА.**

## ЧĂВАШ НАЦИ ТЕЛЕКУРАВĔН ЭРНЕЛĔХ ПРОГРАММИ

**Тунтикун, февралĕн 2-мĕшĕ**

13.00, 16.00, 19.00, 22.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
13.15 «ЧĂВАШЛĂХ ТĔНЧИНЕ КИЛСЕМĔР» (12+)
14.00, 17.00, 20.00, 23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
16.15 «ЯЛАН ЯНРА, ЧĂВАШ СĂМАХĔ» (0+)
19.15 «ЫЛТĂН ÇӲПÇЕРЕН» (6+)
19.30 «ЯШ ЧУХ, ÇАМРĂК ЧУХ» (12+)
20.30 «АКИЛБУПСЕР» (6+)
21.00 «ТĂМ ТИВНĔ ЧЕЧЕКСЕМ». ÇАМРĂКСЕН ТЕАТРĔН СПЕКТАКЛĔ (12+)

**Ытларикун, февралĕн 3-мĕшĕ**

7.00, 13.00, 16.00, 19.00, 22.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
7.15 «ЫЛТĂН ÇӲПÇЕРЕН» (6+)
7.30 «ЯШ ЧУХ, ÇАМРĂК ЧУХ» (12+)
8.00, 14.00, 17.00, 20.00, 23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
8.30 «КАЧЕСТВО» (12+)
9.00 «НА ОЛИМПЕ» (12+)
19.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
19.30 «ЭХ, ЮРĂМ, ЯНĂРА» (12+)
20.30 «ТАКИЕ ЖЕ» (12+)
21.00 «ЯЛТА ПУЛСА ИРТНĔ ĔÇ». ЧĂВАШЛА КУÇАРНĂ ФИЛЬМ (12+)

**Юнкун, февралĕн 4-мĕшĕ**

7.00, 13.00, 16.00, 19.00, 22.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
7.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
7.30 «ЭХ, ЮРРĂМ, ЯНĂРА» (12+)
8.00, 14.00, 17.00, 20.00, 23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
8.30 «ЭХ, ЮРРĂМ, ЯНĂРА» (12+)
9.00 «НА ОЛИМПЕ» (12+)
19.15 «ЧĂВАШЛĂХ ТĔНЧИНЕ КИЛСЕМĔР» (12+)
19.30 «КИЛ ĂШШИ» (12+)
20.30 «ДУХОВНАЯ ЖИЗНЬ» (12+)
21.00 «ЮН, КУÇÇУЛЬ, ЮРАТУ, ТАВĂРУ». ЧĂВАШЛА КУÇАРНĂ ФИЛЬМ (12+)

**Кĕçнерникун, февралĕн 5-мĕшĕ**

7.00, 13.00, 16.00, 19.00, 22.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
7.15 «ЧĂВАШЛĂХ ТĔНЧИНЕ КИЛСЕМĔР» (12+)
7.30 «КИЛ ĂШШИ» (12+)
8.00, 14.00, 17.00, 20.00, 23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
8.30 «ДУХОВНАЯ ЖИЗНЬ» (12+)
9.00 «НА ОЛИМПЕ» (12+)
19.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
19.30 «ЭХ, ЮРРĂМ, ЯНĂРА» (12+)
20.30 «НАОБУМ» (12+)
21.00 «ЫРАТУ». ДОКУМЕНТЛĂ ФИЛЬМ (12+)

**Эрнекун, февралĕн 6-мĕшĕ**

7.00, 13.00, 16.00, 19.00, 22.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
7.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
7.30 «ЭХ, ЮРРĂМ, ЯНĂРА» (12+)
8.00, 14.00, 17.00, 20.00, 23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
9.00 «НА ОЛИМПЕ» (12+)
19.15 «ЮРĂ ÇАВРĂМĔ» (12+)
19.30 «АВАН-И» (12+)
20.30 «КОМФОРТНЫЙ ГОРОД» (12+)
21.00 «МЫСКАРАСĂР ТУЙ ПУЛМАСТЬ». КАМИТ (12+)

**Шăматкун, февралĕн 7-мĕшĕ**

7.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
7.15 «ЮРĂ ÇАВРĂМĔ» (12+)
7.30 «АВАН-И»
8.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
8.30 «КОМФОРТНЫЙ ГОРОД» (12+)
9.00 «МУСКАВ КУÇÇУЛЕ ĔНЕНМЕСТ». ЧĂВАШЛА КУÇАРНĂ ФИЛЬМ (12+)
12.00 «ЮРАТСА ПУРĂНСАН. МАРИЯ ГОРШКОВА» (12+)
17.00 «ЯШ ЧУХ, ÇАМРĂК ЧУХ» (12+)
17.30 «КИЛ ĂШШИ»
18.00 «ЭХ, ЮРРĂМ, ЯНĂРА!» (12+)
18.30 «ИКСĔЛМИ ÇĂЛКУÇСЕМ». ГАЛА-КОНЦЕРТ (12+)
20.30 «КАПКĂНРИ КАПКĂН». ЧĂВАШЛА КУÇАРНĂ ФИЛЬМ (12+)

**Вырсарникун, февралĕн 8-мĕшĕ**

9.00 «ЖЕМЧУЖИНКИ ЧУВАШИИ» (6+)
12.00 «ПРЕСТУПЛЕНИЕ И НАКАЗАНИЕ». СПЕКТАКЛЬ ПО РОМАНУ Ф.М. ДОСТОЕВСКОГО (16+)
17.00 «АКИЛБУПСЕР» (12+)
17.30 «ТАКИЕ ЖЕ» (12+)
18.00 «ДУХОВНАЯ ЖИЗНЬ» (12+)
18.30 «НАОБУМ» (12+)
19.00 «ДВИЖЕНИЕ В БЕРЛИНЕ» (12+)
20.30 «АВАН-И» (12+)
21.00 «ДЖУНГЛИРЕ ÇУХАЛНИСЕМ». ЧĂВАШЛА КУÇАРНĂ ФИЛЬМ (12+)


## РЕКЛАМА, ПĔЛТЕРӲСЕМ

**2. АКЦИЯ! Блоки керамзитобетонные** 20х20х40 – 33 руб., 12х20х40 – 29 руб., 10х20х40 – 25 руб. Высокое кач-во. Доставка. Т. 89674704677.

**3. АКЦИЯ! Кольца колодезные** диам. 0,7 м, 1 м, 1,5 м. Д-ка манипулятором. Бурение. Т. 89674704677.

**23. Гравмассу,** песок, бой кирпича, **щебень.** Д-ка. Т. 89061355241.

## УЙӐХ КАЛЕНДАРӖ

| Число, кун | | Январь, 28 – юнкун | Январь, 29 – кӗҫнерникун | Январь, 30 – эрнекун | Январь, 31 – шӑматкун | Февраль, 1 – вырсарникун | Февраль, 2 – тунтикун | Февраль, 3 – ытларикун |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ХӖВЕЛ | тухать | 7.54 | 7.52 | 7.51 | 7.49 | 7.47 | 7.45 | 7.43 |
| | анать | 16.13 | 16.16 | 16.18 | 16.20 | 16.22 | 16.24 | 16.26 |
| Кун тӑршшӗ | | 8.19 | 8.24 | 8.27 | 8.31 | 8.35 | 8.39 | 8.43 |
| УЙӐХ | тӑхри | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать |
| | кунӗ | 8-мӗш кун | 9-мӗш кун | 10-мӗш кун | 11-мӗш кун | 12-мӗш кун | 13-мӗш кун | 14-мӗш кун |
| | (12 сехет тӗлне) | Вӑкӑр паллинче | Йӗкӗреш паллинче | Йӗкӗреш паллинче | Рак паллинче | Рак паллинче | Рак паллинче | Арӑслан паллинче |

## КӖСКЕН

### Эмел хакне тӗрӗслеҫҫӗ

Сывлӑха сыхлас ӗҫпе социаллӑ аталану министерстви палӑртнӑ тӑрӑх – чирлесен сипленме кирлӗ эмел республикӑра ҫителӗклӗ, тепӗр ҫур ҫуллӑха та ҫитет. Ҫавӑнпа ку тӗлӗшпе ҫивӗч ыйту сиксе тухмалла мар.

Эмелсен хакне те тӗрӗслесех тӑраҫҫӗ. Вӗсене сутакан 180 аптекӑри хаксене ведомство специалисчӗсемпе волонтерсем кунсерен тӗрӗслеҫҫӗ. Рецептсӑр сутӑнакан, сынсем час-часах туянакан вӑтӑр тӗрлӗ эмелрен 22-шӗ хакланнине тупса палӑртнӑ. Ҫав шутран 9-ӑшӗ – ют ҫӗршывра туса кӑларни. Хальччен 50 тенкӗрен йӳнӗрех пулнӑ эмелсем самай хакланнӑ. Папаверин, циннаризин, бор кислотин спиртлӑ шӗвекӗн хакӗ – 10-14 процент, корвалол, гастал, пентафлуцин йышшисен 5-7 процент ӳснӗ.

Турра шӗкӗр, вӑраха кайнӑ чирсенчен сипленмелли эмел хакӗсем ытлашши хӑпарман темелле, 2 процент чухлӗ кӑна хакланнӑ. Вӗсен хакне, ҫавӑн пекех аптекӑсем хӑйсем ӳстерекен хушма хака, патшалӑх тӗрӗслесе тӑрать.

### Унашкалли ан ҫулӑхтӑр

Усал чир тесен ял ҫыннин те, хулара пурӑнаканнин те чунӗ сӳлетсе илет. "Унашкалли ман ҫума ан ҫулӑхтӑрччӗ", – тет кашниех хӑйӗн ӑшӗнче. Ҫавӑнпа республикӑри онкологи диспансерӗнче йӗркеленӗ "усӑ алӑксен кунне" лекес тесе тӑрӑшать. Онкологи чирӗсемпе кӗрешмелли пӗтӗм тӗнчери кун сывхарса пынӑ май республикӑра хальхи вӑхӑтра ятарлӑ уйӑхлӑх пырать. Январӗн 31, февралӗн 4 тата 7-мӗшӗсенче онкологи диспансерӗнче республикӑра пурӑнакансене специалистсем йышӑнаҫҫӗ. Январӗн 24-мӗшӗнче кӑна вӗсем 1100 ҫыннӑн сывлӑхне тӗрӗсленӗ. 8 ҫын ракпа чирлине тупса палӑртнӑ.

Иккӗлентерекен чир паллине сирме 150 ҫынна УЗИ тунӑ, 176 хӗрарӑм кӑкӑрне тӗрӗслеттернӗ, ытти тӗрӗслев те чылай иртернӗ.

### Таса шыв ӗҫесчӗ

"Таса шыв" тӗллевлӗ программӑна пурнӑҫлама федераци бюджечӗнчен уйӑрнӑ укҫапа республикӑра туллин усӑ курнӑ. Ҫакӑн ҫинчен Чӑваш Республикин Министрсен Кабинечӗн ертӳҫи Иван Моторин ирттернӗ канашлура строительство министрӗ Олег Марков пӗлтернӗ.

Асӑннӑ программа 2011 ҫултанпа пурнӑҫланать. Ҫак тапхӑрта халӑхшӑн пӗлтерӗшлӗ 5 объекта хута янӑ. Вӗсене тума 1394,1 млн тенкӗ кайнӑ. Ҫав шутра 945,6 млн тенкӗ – федераци бюджетӗнчен, 448,5 млн тенкӗ – республика хысниччен.

Паянхи куна Вӑрнарти шыв объектне, ҫавӑн пекех Патӑрьел, Шӑмӑршӑ районӗсене тата Комсомольски районӗн кӑнтӑр пайне тивӗҫтерекеннисене туса пӗтернӗ, Шӑхасан ялӗнчи тата Ҫӗрпӳ хулинчи шыв тасатакан сооруженисене тӗпрен юсаса ҫӗнетнӗ. Кӑҫалхи ҫур ҫулта Йӗпреҫри шыва биологи мелӗпе тасатмалли объекта тӑвас ӗҫе вӗҫлемелле.

**Ирина ПАВЛОВА хатӗрленӗ.**

# Фермерсене – пулӑшу

Ҫӗршывра 2012 ҫулта йышӑннӑ «Ӗҫе пуҫӑнакан фермерсене 2012-2014 ҫулсенче пулӑшасси», «Вырӑнти-чӗрлӗх ӗрчетекен ҫемье фермисене хресчен-фермер хуҫалӑхӗн никӗсӗ ҫинче аталантарасси» программӑсем ялхуҫалӑхне ҫӗнӗ сывлӑш вӗрсе кӗртрӗҫ. Ҫак тапхӑрта ӗҫе пуҫӑнакан 151 фермер тата выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетекен 16 ҫемье патшалӑх пулӑшӑвӗпе усӑ курма пултарчӗ.

Программӑсем хута кайни республикӑра выльӑх-чӗрлӗх продукцине туса илессине палӑрмаллах ӳстерме, фермер хуҫалӑхӗсене ура ҫине тӑма пулӑшрӗ. Виҫӗ ҫулта ҫемье фермине тума патшалӑхран – 91 млн, фермер хуҫалӑхне йӗркелесе яма 159 млн тенкӗлӗх пулӑшу илнӗ. Конкурспа суйласа илнӗ фермерсенчен 40-ӗшӗ тыр-пул ӳстерет, 5-ӗшӗ сурӑх, 122-шӗ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетет. Патшалӑх пулӑшӑвӗ харама кайманни куҫ умӗнчех. 2014 ҫулхи тӑхӑр уйӑхра умӗнхи ҫулӑн ҫав тапхӑрӗпе танлаштарсан мӑйракаллӑ шултра выльӑх-чӗрлӗх хисепӗ 1,8 хут ӳссе 1815 пуҫа ҫитнӗ. 96 фермер хуҫалӑхӗ мӑйракаллӑ шултра выльӑх ӗрчетет. Патӑрьел районӗнчи Радий Бикчурин фермер 81 пуҫ усрать. Ку тӑрӑхри Анатолий Лялькин вара 65 ӗне выльӑх тытать. Денис Харитонов (Вӑрнар районӗ), Сергей Сергеев (Елчӗк) фермерсен те кӗтӗвӗ пӗчӗкех мар, 63-шер пуҫ. Республика фермер ӗҫне пуҫӑнакансене, ҫемье фермине йӗркелекенсене пулӑшма федерацин патшалӑх пулӑшӑвӗн программисене тӑваттӑмӗш ҫул хутшӑнать. Иртнӗ ҫулхи кӗрккунне Чӑваш Енрен кирлӗ документсене Раҫҫей ялхуҫалӑх министерствине тӑратнӑ ӗнтӗ. Кӑҫал фермер хуҫалӑхӗсене пулӑшма 39 млн тенкӗ ытларах уйӑрма палӑртнӑ. Чӑваш Ен бюджетӗнчен 16,3 млн тенкӗ. Вӑл 53 фермера пулӑшма ҫитмелле.

**Лариса АРСЕНТЬЕВА.**

## АХ, АНЧАХ...

### Вырнаҫтарма ӗлкӗреймен

Ӗҫе вырнаҫас темен ҫын ҫӑмӑллӑн пурӑнасшӑн. Пысӑк укҫа илӗртсессӗн саккуна пӑснине те шута илмест. Наркотик сарас ҫул ҫине тӑрсан усал туртӑм серепине ҫакланнӑ ҫын пурнӑҫне вӑхӑтсӑр татать, унӑн вун-вун тӑванне куҫҫульпе макӑртать. Хӑҫан та пулин пуҫа илнӗ-ши ҫакна Ҫӗнӗ Шупашкарта пурӑнакан 38 ҫулти арҫын, мӑшӑрӗпе тата ҫул ҫитмен икӗ ачипе хӑтлӑ хваттерте пурӑнаканскер? Шӑпах унӑн хваттерӗнче наркотӗрӗслев ӗҫченӗсем 3,25 грамм героинпа 33,3 грамм гашиш тупнӑ. Вӗсене кил хуҫи сутма хатӗрленнӗ-мӗн.

Наркотик саракансем ушкӑнпа ӗҫлени те палӑрнӑ. Право йӗркине хуралласансем Ҫӗнӗ Шупашкарта пурӑнакан виҫӗ ҫынна наркотик сарнӑшӑн тытса чарнӑ. Ҫак ушкӑна шӑпах 38 ҫулти арҫын йӗркеленӗ пулӗ тесе шухӑшлаҫҫӗ.

Малаллахи шыравра наркотӗрӗслев управленийӗнче тӑрӑшакансем гашиша пысӑк партипе упранӑ вырӑна тупнӑ. Сад юлташлӑхӗнчи пахчара пытарнӑскере тупма йытӑ пулӑшнӑ. 400 грамм гашиш ҫынсен пурнӑҫне аркатма саланайман.

**Людмила СЕМЕНОВА.**

### Чӗлӗм туртма хӑтланнӑ та ...

Ҫак кунсенче право органӗ Етӗрне районӗнчи 23 ҫулти хӗрарӑма явап тыттарма уголовлӑ ӗҫ пуҫарнӑ. Унӑн айӑпӗпе виҫӗ ҫулти арҫын ача пурнӑҫӗ татӑлнӑ.

Пӗлтӗр кӗрккунне хӗрарӑм кӗҫӗн ҫулхи ачине пӗччен хупса хӑварса ӗҫе тухса кайнӑ. Юнашар аслисем пулманнипе усӑ курса пӗчӗкскер чӗлӗм туртса пӑхма шутланӑ. Килте арҫынсем унӑн куҫӗ умӗнчех чӗлӗм мӑкӑрлантарни сая кайман темелле. Пӗчӗкскер сиенлӗ йӑлана хӑвӑрт ӑса хывнӑ. Ҫитменнине шӑрпӑкне те курӑнакан вырӑнах хурса хӑварнӑ пулсан мӗнле тытӑнса тӑрӑн? Анчах шӑрпӑка чӗртме хӑтланса дивана вут хыптарнӑ вӑл. Пӳрте самантрах сӑмсана ҫуракан йывӑр шӑршӑ сарӑлнӑ. Алӑка тул енчен питӗрсе хӑварнине арҫын ача вут-ҫулӑмран тухса тарайман.

Ҫуртран йӑсӑрланакан хура тӗтӗме асӑрхасан ял ҫыннисем тӳрех пушар хуралне шӑнкӑравласа пӗлтернӗ. Ҫулӑма ҫийӗнчех сӳнтернӗ, анчах тӑнне ҫухатнӑ ачана тухтӑрсем ҫӑлса хӑвараймаН.

Аслисен айӑпӗпе пӗчӗкскер ӗмӗрлӗхех куҫне хупнӑ.

### Тӑлӑха – юрӑхсӑр ҫурт

Тӗпчев пайӗ Элӗк районӗнчи Ехремкассинчи ял тӑрӑхӗн пуҫлӑхӗ тӗлӗшпе пуҫарнӑ уголовлӑ ӗҫе тӗпчесе пӗтернӗ. Сывӑх вӑхӑтра Хӗрлӗ Чутай район сучӗ ӑна пӑхса тухса пӑнчӑ лартӗ.

Тӗпчев палӑртнӑ тӑрӑх, 2008 ҫулта ял тӑрӑхӗн пуҫлӑхӗ Анаткассинче пурӑнмалли ҫурт туяннӑ. Уншӑн хуҫисене 280 пин тенкӗ кӑларса тыттарнӑ. Туса пӗтерейммен пӳртре пурӑнма юрӑхсӑрри те хӑратман пуҫлӑха. Хӑйӗн кӗсйинчен мар вӗт, бюджет укҫине тӑкаклатнӑ. 2010 ҫулта строительство ӗҫӗсене вӗҫлемесӗрех социаллӑ ҫурт-йӗре 19 ҫулти тӑлӑха уйӑрса панӑ. Тӑлӑх-туратӑн юсав ӗҫӗсем валли укҫа тупӑнманнипе унта пурӑнма кусайман. Пуҫлӑх чаплӑ ҫуртра рехетленсе пурӑннӑ вӑхӑтра тӑлӑхӑн паянхи кун та хӑйне уйрӑм кӗтес ҫук. Унӑн хӑтлӑ хваттерлӗ пулас ӗмӗтне Ехремкассинчи пуҫлӑх самантрах ҫапса хуҫнӑ.

**Л. АЛА.**

# Ҫӗр – тухӑҫ амӑшӗ, ӗҫ – тухӑҫ ашшӗ

← 2-мӗш стр.

– Сиреншӗн ӗҫ е ҫемье малти вырӑнта?

– Ӗҫ маншӑн чун киленӗҫӗ. Ака-суха вӗҫленсен мотоцикл ҫине ларса лаптӑксене пӑхса ҫаврӑнатӑп, хам ӗҫе хаклатӑп: акӑнмасӑр юлман-и, йӑрансам тӳрех-и? Ешӗл калча шӑтса тухнине курсан чун ҫӗкленсе каять. Тавралӑх чӗрӗлнишӗн, ҫӗнӗ пурнӑҫ вӑй илнишӗн мӗнле хӗпӗртемӗн-ха? Шӑплӑхра тӑри юррине итлесе киленетӗп. Халӗ сухалатӑп кӑна пулин те, калча шӑтса тухнӑ вӑхӑтра уй-хирех чун туртать.

Ҫемье те хаклӑ маншӑн. Сывӑх ҫынсемсӗр пурӑнаймастӑп.

### Ҫӳпҫине кура хупӑлчи

Мӑшӑрӗпе 30 ҫул шӑкӑл-шӑкӑл килӗштерсе пурӑнаҫҫӗ вӗсем. Ҫемьере чашӑк-тирӗк шакӑртатмасӑр пулмасть, анчах килти ҫӳппе яла кӑларман.

– Ҫамрӑк чухнех Юрий тӑрӑшуллӑччӗ. Сӑпайлӑхӗпе кӑмӑла ҫаврӗчӗ, – аса илет Елена Татарова. – Хама унпа шанчӑклӑ, телейлӗ туятӑп. Турӑ ҫӳлтен ярса панӑ мӑшӑрӑм вӑл. Упӑшкапа ятлаҫса-вӑрҫса курман. Мӗнпур ыйтӑва пӗрле татса паратпӑр.

Кил хуҫи вӑхӑта ытларах ӗҫре иртернӗ май хушма хуҫалӑх арӑмӗпе икӗ хӗрачи ҫине тиеннӗ.

– Ачасем вӑл ӗҫе тухса кайнӑ чухне сывӑрса юлатчӗҫ, тавраннӑ тӗле каллех вырӑн ҫинче. Хӗрӗмсем пӗчӗкрех чухне тӑтӑшах: «Пирӗн атте ӑҫта пурӑнать? Мӗншӗн киле килмест?» – тесе ыйтатчӗҫ. Уншӑн ҫав тери тунсӑхлатчӗҫ. Вӗсене нихӑҫан та сивӗ сӑмах каламан вӑл. Хӗрсем ҫитӗнсен те: «Пирӗн те атте пек ырӑ кӑмӑллӑ упӑшка тупасчӗ», – тетчӗҫ.

Светланӑпа Наташӑн халӗ хӑйсен ҫемйисем. Ӗмӗтленни пурнӑҫа кӗнӗ темелле: иккӗшӗн те мӑшӑрӗ ӗҫчен, пултаруллӑ. Таторовсене савӑнмалӑх виҫӗ мӑнук ӳсет. «Ачасем килтен тухса кайсан ҫурт пушансах юлчӗ. Вӗсем килессе кӗтсех тӑратпӑр. Мӑнуксем тӳрех трактор патне чупса пыраҫҫӗ, техникӑпа пӗчӗкренех кӑсӑкланаҫҫӗ, – савӑнаҫҫӗ кукамӑшӗпе кукашшӗ. – Тен, кукашшӗн ҫулне суйласа илӗҫ?»

Татаровсене ҫемье ҫавӑрсан хуҫалӑх виҫӗ пӳлӗмлӗ хваттер уйӑрса панӑ. Ҫемье юнашарах хуралтӑсем ҫӗкленӗ, выльӑх-чӗрлӗх йышлӑ усрать.

«Хуҫалӑхра ӗҫлекенсене кашни уйӑхрах 5-шер килограмм аш-какай параҫҫӗ. Выльӑх усраса нушаланмалла мар темелле, анчах ачасене пулӑшас килет-ҫке», – терӗ Елена. Татаровсен чаплӑ машина та ҫук. «Мӗн тума вӑл пире? Машина нихӑҫан та пуянлӑхшӑн, укҫашӑн хапсӑнман. Уншӑн трактортан чаплӑ техника ҫуктӑр».

**Лариса НИКИТИНА.**

«ХРЕСЧЕН САССИ»
Обществӑпа политика хаҫачӗ
Индекс 54838
Учредительсем – Чӑваш Республикин Информаци политикин тата массӑллӑ коммуникацисен министерстви, Чӑваш Республикин Информаци политикин тата массӑллӑ коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство ҫурчӗ» Чӑваш Республикин хӑйтытӑмлӑ учрежденийӗ

ДИРЕКТОР-ТӖП РЕДАКТОР – В.В. ТУРКАЙ
С.Л. Павлов – тӗп редактор заместителӗ
РЕДКОЛЛЕГИ:
Е.Н. Николаева – пай редакторӗ
В.М. Петрова – корреспондент
С.Л. Павлов – тӗп редактор заместителӗ
Е.А. Трофимова – хаҫат операторӗ

www.hypar.ru,
e-mail: hreschen@cbx.ru
Редакципе издатель адресӗ: Шупашкар, И. Яковлев пр., 13.
Телефонсем:
директор-тӗп редактор – 56-00-67,
тӗп редактор ҫумӗ – 62-04-54,
пайсем – 56-34-63, 62-50-06, 28-86-68,
реклама пайӗ тел./факс – 28-83-70.
Факс (8352) 62-50-06

Хаҫата 2013 ҫулхи раштав уйӑхӗн 10-мӗшӗнче Федерацин ҫыхӑну, информаци технологийӗсемпе массӑллӑ коммуникацисен сферинчи саккунсене пӑхӑннине сӑнаса тӑракан службин Чӑваш Республикинчи управленийӗ ПИ ТУ 21-00305 № регистрациленӗ.
Хаҫата «Хыпар» Издательство ҫурчӗ» АУ техника центрӗнче калӑпланӑ хатӗр оригинал-макетран «Чӑваш ЕН» ИПК» ПУП типографийӗнче пичетленӗ. 428019, Шупашкар, И. Яковлев пр-чӗ, 13.

Графикпа 17 сехетре алӑ пусмалла.
17 сехетре алӑ пуснӑ.
Заказ 231
Тираж 3324

* Рекламӑпа пӗлтерӳсем. Реклама тексчӗсемпе пӗлтерӳсемшӗн вӗсене паракансем яваплӑ.